28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
21
ШАМАТКУН
139(6890) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Ҫамрӑк коммунистсене вӗрентсе ӳстересси— парти организацийӗсен тӗп задачи

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра большевиксен партийӗ пысӑк та историллӗ задачӑна пурнӑҫа кӗртрӗ. Вӑл Совет ҫӗршывӗнчи ӗҫҫыннисене кӗрешӗве мобилизацилесе ертсе пыраканӗ пулчӗ. Вӑрҫӑн йывӑр кунӗсенче большевиксем Тӑван ҫӗршыва чун-чӗререн парӑннине, уншӑн юлашки тумлам юн юлмиччен кӗрешме хатӗррине тӗлӗнмелле паттӑррӑн та хӑюллӑн кӑтартса пачӗҫ. Тӑшмана хирӗҫ пынӑ хаяр кӗрешӳ вутӗнче коммунистсен партийӗ ҫав тери паха опытпа пуянланчӗ. Ӗҫҫыннисен аслӑ массисене хӑй тавра татах та таччӑнрах пӗтӗҫтерме пултарчӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче парти халӑх массипе мӗнле ҫирӗп ҫыхӑнса тӑнине парти йышӗ хӑвӑрт ӳссе пыни те лайӑх кӑтартса парать. Парти ретне заводсенчи, МТС-сенчи, колхозсенчи тата совет интеллигенцийӗ хушшинчи чи лайӑх ҫынсем кӗреҫҫӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче пирӗн облаҫри парти организацийӗ парти ретне 14 пин ҫын ытла, вӑл шутран 9 пин ҫын ытла парти членӗн кандидатне илнӗ. Ҫапла вара, облаҫри парти организацийӗнче ҫак юлашки виҫӗ ҫул хушшинче кӗнӗ коммунистсем ытларах шутланаҫҫӗ. Первомайски, Чкаловски, Советски, Октябрьски тата ытти районсенчи парти организацийӗсенче пӗтӗм коммунистсен 50—60 проценчӗ ҫамрӑк коммунистсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ ҫамрӑк коммунистсене, уйрӑмах парти членӗн кандидачӗсене, воспитани парас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлеме кирли курӑнсах тӑрать.

Владимир Ильич Ленин 1920 ҫулта, парти ретне ҫӗнӗ членсем йышлӑн хутшӑннӑ май, ҫапла каланӑ: пирӗн задача —ҫамрӑк коммунистсене пӗлӳ тӗлӗшӗнчен ӳссе пыма хӑвӑрт та ӑнӑҫлӑн, тӑрӑшса пулӑшасси; вӗсенчен коммунизм тӑвакан кадрсем туса хатӗрлесси; пысӑк та ответлӑ ӗҫсенче ӗҫлеме пултаракан аслӑ ҫынсем тӑвасси тата халӑх массипе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлеме пултаракансем тӑвасси пулса тӑрать, тенӗ.

Парти членӗсемпе кандидачӗсене воспитани парасси яланах парти организацийӗсен тӗп задачи пулса тӑнӑ. Ку ӗҫе уйрӑмӑнах халӗхи вӑхӑтра, ҫӗршыв мирлӗ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине куҫнӑ тапхӑрта, вӑйлӑлатса пыни кирлӗ. Анчах та чылай районсенчи парти организацийӗсенче ку тӗлӗшпе халӗ те ҫитменлӗхсем пур-ха. Парти ретне ҫӗнӗ член е кандидат илнӗ хыҫҫӑн вӗсем ун ҫинчен час-часах манса каяҫҫӗ. Хӑшпӗр чухне тата ҫакӑн пек те пулкалать: парти ретне кӗриччен парти организацийӗсем пӗр-пӗр юлташа общество ӗҫе явӑҫтараҫҫӗ, ӗҫре пулӑшса пыма, унӑн политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерме тӑрӑшаҫҫӗ. Кайран вара, парти ретне илнӗ хыҫҫӑн, ун ҫинчен аса та илмеҫҫӗ.

Хӑшпӗр районсемпе хуласенчи парти организацийӗсенче кандидатсенчен ҫурри ытла кандидатра пулмалли вӑхӑта иртерсе янине мӗнле ӑнлантарса памалла-ха? Вӑрмар районӗнче вӗсем 55 процент, Улатӑр районӗнче 53 процент, Вӑрнар районӗнче 54 процент, Элӗк районӗнче 51 процент шутланаҫҫӗ. Кун пек тӗслӗхсем республикӑра татах та нумай.

Ҫакӑ вӑл партин уйрӑм пуҫламӑш организацийӗсем ҫамрӑк коммунистсене воспитани парас ӗҫе тивӗҫлипе хакламаннинчен килет. Чылай ҫӗрте кандидатсене политикӑллӑ ӗҫе тата парти организацийӗн пурнӑҫӗнчи кулленхи ӗҫе явӑҫтарса пымаҫҫӗ. Вӗсене ӗҫре ӳссе пыма, парти решенийӗсене большевикла пурнӑҫласа пыма хӑнӑхтарас тӗлӗшпе поручениесем парса тӑмаҫҫӗ.

Чылай парти организацийӗсенче кандидатсене член укҫи тӳлессипе пухусене йӗркеллӗ ҫӳресси ҫинчен асӑрхаттарнисӗр пуҫне урӑх нимӗнле ӗҫ те тумаҫҫӗ. Хӑш чух тата кандидатсемпе канашлу туса ирттереҫҫӗ те, ҫакӑнпа вара ҫамрӑк коммунистсене воспитани парас ӗҫ пӗтет, тесе шутлаҫҫӗ. Паллах, член укҫисене вӑхӑтра тӳлесси тата парти пухӑвӗсене ҫӳресси кашни парти членӗпе кандидачӗшӗн чи малтанхи тивӗҫ пулса тӑраҫҫӗ. Анчах та ҫакӑнпа пӗрлех тӗп ӗҫ ҫинчен —парти кандидачӗсене куллен воспитани парса пырасси ҫинчен—пӗр минутлӑха та манма юрамасть.

Кандидатра пулмалли вӑхӑт парти кандидачӗсене идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен воспитани памалли шкул пулса тӑрать. Ҫак вӑхӑтра ӗнтӗ парти организацийӗсем кандидатсен пултарулӑхне, вӗсен пӗлӗвне, чӑтӑмлӑхне тӗрӗслеҫҫӗ.

Кандидатсен ӗҫне парти организацийӗсен яланах асӑрхаса, курса тӑмалла. Вӗсене воспитани парас ӗҫе парти организацийӗн ытти ӗҫӗсемпе ҫыхӑнтарса пымалла. ВКП(б) членне кӗме хатӗрленекенсемшӗн кандидатра пулмалли вӑхӑт вӗсене тӗплӗн тӗрӗслемелли тапхӑр пулса тӑрать, вӗсене ленинла-сталинла принцип тӑрӑх парти ретне уйрӑмӑн тӗрӗслесе илме май парать.

Анчах, ҫапла пулин те, хӑшпӗр пуҫламӑш организацисем ҫак вӑхӑтпа кирлӗ пек усӑ курмаҫҫӗ. Чылай парторганизацисенче кандидатсене нимӗнле поручениcем те памаҫҫӗ, е парсан та, ӑна мӗнле пурнӑҫласа пынине тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ.

Улатӑр районӗнчи Засурски территориллӗ пуҫламӑш организацире 6 кандидат шутланать, вӗсен пурин те кандидатра пулмалли вӑхӑт иртсе кайнӑ. Анчах та ҫакӑ парти организацин секретарьне Герасимов юлташа нимӗн чухлӗ те интереслентермест. Ҫавӑн пекех педагогика институтӗнчи парти организацийӗнче те кандидатсене воспитани парас тӗлӗшпе нимӗнле ӗҫсем те тумаҫҫӗ. Ҫавна пула кунта кандидатра пулмалли вӑхӑт 9 кандидатӑн иртсе кайнӑ.

Ҫамрӑк коммунистсене, уйрӑмӑнах парти кандидачӗсене, вӗрентсе ӳстересси — куллен тумалли ӗҫ. ВКП(б) уставӗ пур коммунистсене те хӑйсен пӗлӗвне куллен ӳстерсе пыма, марксизм-ленинизм теорине вӗренессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеме хушать. Ҫавӑнпа та ҫамрӑк коммунистсене чи малтанах идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен пӗлӳ парас тӗлӗшпе ӗҫлемелле. Вӗсене парти политикин тӗп ыйтӑвӗсене тӗплӗн ӑнлантарса памалла.

Большевикла партин историйӗпе теорине харпӑрхӑй тӗллӗн вӗреннисӗр пуҫне, парти шкулӗсен ӗҫне лайӑхлатмалла, ВКП(б) уставӗпе программине вӗренес ӗҫе пуҫарса ямалла. Ҫамрӑк коммунистсен пӗлӗвне ӳстерес шутпа, политика ыйтӑвӗсем тӑрӑх каласусем ирттермелле.

Ҫамрӑк коммунистсене воспитани парас ӗҫӗн тӗп меточӗ вӑл—вӗсене практикӑллӑ ӗҫе активлӑн явӑҫтарасси пулса тӑрать. Вӗсене, Ленин—Сталин партийӗн ӗҫӗшӗн ҫирӗп тӑма вӗрентекен поручениcем парса, тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла. Парти ретне кӗрекенсем кашниех партипе Тӑван ҫӗршыв умӗнче хӑйсен ответлӑхне туйса ӗҫлемелле.

Пирӗн республикӑри колхозсем ялхуҫалӑх ҫулӗн чи ответлӑ тапхӑрне кӗреҫҫӗ: кӗҫех вӗсем тырпул пухса кӗрес ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Парти организацийӗсен задачи—коммунистсене ӗҫе тӗрӗс вырнаҫтарса тухасси, ҫамрӑк коммунистсене политикӑллӑ ӗҫе активлӑн явӑҫтарасси пулса тӑрать. Коммунистсем тырпул пухса кӗртес ӗҫре ертсе пыракан вырӑн йышӑнмалла. Кашни коммунист хӑйӗн практикӑллӑ ӗҫӗпе тырпула хӑвӑрт тата пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртме колхозсене пулӑшса пымалла.

Потребительсен кооперацийӗ ҫартан таврӑнакан воинсене кӗтсе илес ӗҫе хутшӑнать

Центросоюз президиумӗ потребительсен кооперацийӗн организацийӗсене пурне те ҫартан таврӑнакан воинсене кӗтсе илес ӗҫе, пуриччен ытла вӗсем чугун ҫул станцийӗсемпе пристаньсенчен хӑйсен тӑван ялӗсене кайнӑ чухне кӗтсе илес ӗҫе, активлӑн хутшӑнма хушнӑ. Чайнӑйсенче, буфетсенче тата столовӑйсенче, аслӑ ҫулсем ҫинче ларакансклерсенче, чей, кофе, тӗрлӗ закускӑсем, квас, морс тата ыттисем те сутма хушнӑ. Колхозниксен ҫурчӗсенче тата кӗрсе выртмалли ҫуртсенче ҫартан таврӑнакансене вырӑн тупса памалла. Парикмахерскисене, кӗпе-тумтирпе атӑ-пушмак юсакан мастерскойсене киле таврӑнакан воинсене черетсӗр юсаса пама е черетсӗр ҫӳҫ касма хушнӑ. (ТАСС).

500 КЛУБПА КУЛЬТУРА ҪУРЧӖ ЮСАНӐ

Нимӗҫ оккупацийӗнчен ирӗке кӑларнӑ районсенче 500 ытла профсоюз клубӗсемпе культура дворецӗсене юсаса ӗҫе янӑ. Донбасс шахтерӗсен, Днепропетровск тата Днепродзержинск металлургӗсен, кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫ магистралӗсенчи железнодорожниксен тата Белорусси торфяникӗсен клубӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенче культурӑпа массӑллӑ пысӑк ӗҫ пулса пырать. Клубсенче библиотекӑсем уҫӑлнӑ, кинозалсем, художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗсем организациленӗ, яланах политика, наука тата литература ыйтӑвӗсем тӑрӑх лекцисемпе докладсем вулаҫҫӗ.

Ворошиловградри Октябрь революцийӗ ячӗпе тӑракан паровоз завочӗн культура дворецне уҫнӑ. 1.200 ҫын кӗрекен театра ҫӗнӗрен юсанӑ. Гомель тата Конотоп станцийӗсенчи железнодорожниксен клубӗсене юсанӑ. Сурҫӗр Донец чугун ҫулӗ ҫинчи Лопасная станцийӗнче Ленин ячӗпе тӑракан культура дворецне железнодорожниксем хӑйсен вӑйӗпе тунӑ. Унта халӗ драма, хор, музыка кружокӗсем организациленӗ, концертсем, спектакльсем, художествӑллӑ пултарулӑх вечерӗсем пулса иртеҫҫӗ. Белоруссире 200 клубпа культура ҫуртне юхӑн тунӑ.

Ҫӗршыври чи пысӑк культура ҫурчӗсенчен пӗрне—Ленинградри С. М. Киров ячӗпе тӑракан культура ҫуртне юсама ВЦСПС пӗр миллион тенкӗ ытла укҫа панӑ. Тӑшман бомбӑсем пӑрахнине пула тата персе тӑнине пула, вӑл ҫурт пысӑк сиен курнӑ. Халӗ унта лекцисем ирттермелли зала, физкультура залне, кинотеатра, читальнӑна юсаса ҫитернӗ, вӗсем ӗҫлеме пуҫланӑ ӗнтӗ. Унта 100 пин том шутланакан библиотека ӗҫлет. Ҫак дворецра кашни кунах 5.000 ҫын ытла капать.

Юсанӑ клубсемпе культура дворецӗсенчи библиотекӑсене ВЦСПС политика, наукӑпа техника тата илемлӗ литература кӗнекисем 300 пин кӗнеке янӑ. (ТАСС).

Комбайнсемпе молотилкӑсене, тырӑ вырмалли машинӑсене хӑвӑрт тата тӗплӗн юсаса хатӗрлер!

Комсомолецсем уборкӑна хатӗрленеҫҫӗ

СОВЕТСКОЕ. (Телефонпа). Районри комсомолецсемпе ҫамрӑксем уборкӑна тӑрӑшсах хатӗрленеҫҫӗ. Халӗ СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановление колхозниксемпе колхозницӑсене ӑнлантарса пама комсомолӑн районри активӗнчен 21 ҫын колхозсене тухса кайрӗҫ. Ку ыйтӑва колхозсенчи комсомол организацийӗсенче те сӳтсе-яваҫҫӗ.

Халӗ комсомолецсемпе ҫамрӑксем общественлӑ выльӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрлес тӗлӗшпе хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Турай ял Советне кӗрекен «Металлист» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем 70 тонна, Ачак ял Советӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем 30 тонна силос хывса хӑварчӗҫ.

Июлӗн 20-мӗшӗнчен пуҫласа комсомолӑн пур организацийӗсенче те силос хывса хӑвармалли пилӗккунлӑх иртет. Ҫак пилӗк кун хушшинче районри комсомолецсемпе ҫамрӑксен вӑйӗпе 5 пин тонна силос хывса хӑвармалла.

Р. СЕМЕНОВА.
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

Вӑйлӑ тырпул пухса кӗме хатӗр

ВӐРНАР. (Хамӑр корр.). Кушкири «Заря» колхоз хирӗнче вӑйлӑ тырпул ҫитӗнет. Ыраш пуссинчи ҫулпа пыракан лашан пӗкки кӑна курӑнать. Ҫуртырисем те тикӗс, тулӑх ҫитӗнеҫҫӗ.

— Эпир ҫывӑрмасӑр ӗҫлени сая каймарӗ. Уйра вӑйлӑ тырпул пиҫсе ҫитӗнет. Ӗҫленӗҫемӗн ӗҫлес килет пирӗн, — теҫҫӗ колхозниксем хӑйсен уйӗнчи вӑйлӑ тырпулсемпе савӑнса.

Тырпула пухса кӗртесси—вӑхӑтра тумалли ӗҫ. Ҫакна шута илсе, колхоз тырпулсене пухса кӗме пур енчен те хатӗрленсе ҫитрӗ.

Колхозра 2 бригада. Икӗ бригади те тырпул пухса кӗмелли машинӑсемпе инвентарьсене хатӗрлесе хунӑ. Пӗр лобогрейкӑна, икӗ сортировкӑна юсаса лартнӑ. 120 ҫурла шӑллаттарса, 80 ҫава туптаттарса хунӑ тата кӗреплелӗ ҫавасем 16 тунӑ. Кӳлме юрӑхлӑ 18 лаша валли 20 урапа хатӗр лараҫҫӗ. 8 амбара тасатса дезинфекци тунӑ, 60 михӗ, 5 шӑналӑк хатӗрленӗ. Ытти мӗнпур вак япаласене те пӗтӗмпех хатӗрлесе ҫитернӗ. Халӗ ӗҫ планӗ туса хатӗрлеҫҫӗ.

Лашасен йышне ӳстерессишӗн тӑрӑшса ӗҫлемелле

Красноармейски районри «Красная Шатьма», «Красный Борденер» колхозсем лашасен шутне ӳстерессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. «Красная Шатьма» колхоз 1945 ҫулта 13 тиха илнӗ, вӗсем пурте лайӑх ҫитӗнеҫҫӗ.

Кӑҫал хӑмлама пултаракан кӗсресене пурне те чуптарса хӑварнӑ. Анчах пур колхозсем те лашасене ӗрчетес тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Акӑ, «Знамя Ленина» колхозра хӑмлама пултаракан 7 кӗсререн пӗр тиха та илмен. Ҫавӑн пекех ҫак вӑхӑта ҫитсе те пӗр кӗсрене те чуптарса хӑварман. Ҫак колхоз руководителӗсем лаша ӗрчетес ӗҫ мӗнле пысӑк вырӑн йышӑннине ӑнланса илмен-ха.

Зоотехник И. ПОЛЯКОВ.

Утӑ ҫулаҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Районри колхозсем утӑ ҫулма массӑллӑн тухрӗҫ. Кшавӑш ял Советӗнчи «Красный плуг» колхоз утӑ ҫулма тӗплӗн хатӗрленсе тухрӗ. Утӑ ҫулма тухсан малтанхи кунах бригадӑпа бригада, звенопа звено хушшинче ӑмӑрту анлӑн сарса янӑ. Утӑ ҫулас ӗҫре 3-мӗш бригада малта пырать.

Ҫавӑн пекех Сыпайкасси ял Советӗнчи «Ыраш» колхоз та утта кӗске вӑхӑтра пухса кӗртессишӗн тӑрӑшса ӗҫлет. Кунта ӗҫе звеносемпе туса пыраҫҫӗ. Утӑ ҫулас ӗҫре уйрӑмӑнах ватӑ колхозник Василий Вершинин тӑрӑшса ӗҫлет. Вӑл кулленхи нормӑна 110—115 процент тултарать. Нумаях пулмасть Хӗрлӗ Ҫартан килнӗ С. Скворцов юлташ та ҫамрӑксене пример кӑтартса ӗҫлет.

Колхоз бригадирӗ А. Быков юлташ утӑ ҫулнӑ ҫӗрте тунӑ ӗҫкунӗсене кашни кунах колхозниксен ӗҫ кӗнекисем ҫине ҫырса пырать. Ку вара колхозниксен ӗҫлес хастарлӑхне хӑпартать.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадинче

ВӐРНАР. (Хамӑр корр.). Машинно-тракторнӑй станци июлӗн 7-мӗшӗнчех тракторпа ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана тултарчӗ. Социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса илнӗ обязательствӑсене МТС коллективӗ ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӗ.

Ҫак ӗҫре, ытти бригадӑсемпе пӗрлех, комсомолецсемпе ҫамрӑксен 7-мӗш трактор бригади те паха тӗслӗхсем кӑтартрӗ, ҫулталӑкри плана 127 процент тултарчӗ. Ҫав вӑхӑтрах бригада 2.660 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ.

— Манӑн трактор бригадинче пӗтӗмпе тенӗ пекех хӗрачасем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ӗҫӗпе мухтанма тата савӑнма пултараҫҫӗ,—тет трактор бригадин бригадирӗ коммунист И. Алексеев юлташ. — Ҫак бригада ӗҫлесе паракан «Заря», «11 лет Чувашии», «Комсомолец», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсен уйхирӗсенче уйрӑмах вӑйлӑ тырпул ҫитӗнет. Ҫакӑ вара МТС колхозсене вӑйлӑ тырпул туса илме пулӑшни ҫинчен, трактористсемпе трактористкӑсем пысӑк пахалӑхпа ӗҫлени ҫинчен калать.

Чӑнах та лайӑх ӗҫлеҫҫӗ бригадӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксем. Трактористка Ульяна Порфирьева хӑйӗн планне икӗ хут ытла ирттерсе тултарчӗ. Унӑн планпа 155 гектар сухаламалла пулсан, халӗ вӑл 355 гектар сухаланӑ, 746 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. Ульяна Порфирьевӑн кӑкӑрӗ ҫинче «Лучший тракторист» значок ҫуталса тӑрать. Варвара Капирова 290 гектар сухаланӑ тата 343 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. Вера Григорьева 280 гектар сухаланӑ тата 116 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ, Евдокия Павлова 178 гектар сухаланӑ тата 325 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен 7-мӗш номерлӗ трактор бригади ӗҫлекен колхозсен председателӗсем, колхозникӗсем трактористсене юратаҫҫӗ, хисеплеҫҫӗ.

Халӗ бригада колхозсен тырпулне пухса кӗртме хатӗрленсе ҫитрӗ. Бригада тырпулсене чи кӗске срокра тата лайӑх пахалӑхпа пухса кӗртме шутлать.

Пирӗн ҫӗршыв Ҫӗнтерӳ тунӑ ятпа предприятисенче социализмлӑ ӑмӑрту пуҫланса кайни ҫинчен пӗлсенех, бригадӑра трактористсемпе трактористкӑсем Ҫӗнтерӳ ячӗпе пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ. Вӗсем ялхуҫалӑх ҫулӗ вӗҫленнӗ тӗле хӑйсен планне икӗ хут ытла ирттерсе тултарма пулаҫҫӗ.

Е. ВОЛКОВ.

Колхозра дисциплина начар

СОВЕТСКОЕ. (Хамӑр корр.). Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче чӑтма ҫук кая юлса пырать. Ҫӗртме 48 гектар тумалла пулсан, 29 гектар ҫеҫ сухаланӑ. Сухалама ирхине 10—11 сехетсенче тухаҫҫӗ те, кас пуличченех каялла кӗреҫҫӗ. Кашни кун 2—3 плугпа ҫеҫ сухалаҫҫӗ, хӑшпӗр кунсенче вара пачах сухаламаҫҫӗ.

Уйри ҫӗрулмине пӗтӗмпех ҫумкурӑк пусса илнӗ. Ӑна ҫумласа купалама тытӑнман. Ҫуртырӑсене те ҫумкурӑкӗнчен тасатса ҫитермен.

Кунта уйри тырпулсене пухса кӗртме хатӗрленесси ҫинчен пачах шутламаҫҫӗ. Ку енӗпе ӗҫ планӗ туса хатӗрлемен. Молотилка хӗл каҫиччен итем ҫинче тутӑхса ларчӗ. Ӑна та, жнейкӑна та юсама тытӑнман. Ҫурласене шӑллаттарасси пирки сӑмах та хускатмаҫҫӗ-ха. Кӗлетсемпе складсене тырпула йышӑнмашкӑн хатӗрлесе ҫитермен. Тарасасем хатӗр мар, шӑналӑксемпе михӗсем те ҫителӗксӗр.

Колхозра ӗҫ дисциплини начаррине колхоз председателӗ те, ял Совет председателӗ те аван кураҫҫӗ. Анчах вӗсем дисциплинӑна ҫирӗплетес тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

Я. СИГАЙ.

Транспорт инвентарӗсене юсарӑмӑр

Ишлей районӗнчи «Новая жизнь» колхоз членӗсем (председателӗ М. Васильев юлташ) тырпул пухса кӗме хатӗрленсе ҫитессишӗн тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Колхозри ҫурласене шӑлласа хатӗрлесе хунӑ, ҫӗнӗрен урапасем тӑваҫҫӗ, киввисене юсаҫҫӗ. Ку ӗҫре уйрӑмӑнах С. Филипповпа П. Никифоров колхозниксем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем 22 урапа юсарӗҫ. Ҫавӑн пекех ут таврашӗсене те юсаса хатӗрлесе хунӑ.

Тулӑ калчисене, пӑрҫана ҫумласа пӗтернӗ. Ҫӗртме сухине паян-ыран туса пӗтеретпӗр. Колхозра икӗ бригада пӗрпӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Малта пыракан бригадӑна пама колхоз правленийӗ куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав тунӑ. Ҫураки вӑхӑтӗнче вӑл ялав 1-мӗш бригадӑра пулчӗ. Ялава кулленхи нормӑна 120—130 процент тултарса ӗҫлекен сухаҫӑ П. Сергеев юлташ илчӗ.

Тырпул пухса кӗртес ӗҫре те ҫак ялава алӑрах хӑварассишӗн пӗрремӗш бригадӑри колхозниксем ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

М. ГАЛКИНА,
1-мӗш бригадӑн бригадирӗ.

СССР Наука академийӗнче

Кӑҫалхи июлӗн 17-мӗшӗнче СССР Наука академийӗн пӗрлехи пухӑвӗ пулса иртнӗ. Пухура Наука академийӗн президенчӗ Владимир Леонтьевич Комаров академик сывмар пирки хӑйне президент пулса ӗҫлессинчен хӑтарма ыйтса ҫырнӑ заявление пӑхса тухнӑ.

В. Л. Комаровӑн заявленийӗ ҫинчен СССР Наука академийӗн вице-президенчӗ В. П. Волгин академик доклад туса панӑ. Владимир Леонтьевич Комаров Наука академийӗн Президиумне заявлени панӑ, ҫав заявленире вӑл хӑйне сывлӑхӗ начар пирки Наука академийӗн Президенчӗ пулса ӗҫлессинчен хӑтарма ыйтни ҫинчен пӗрлехи пухура каласа пама ыйтать, тесе пӗлтернӗ Волгин академик. Владимир Леонтьевич кӑҫалхи октябрь уйӑхӗнче 76 ҫул тултарать, ҫавӑнпа та пирӗн, унӑн сывлӑхӗшӗн тӑрӑшса, вӑл ыйтнине кӑмӑл тумалла: ӑна, тӑтӑшах сывалса пыма май парас тесе, президент ӗҫӗсене туса пырассинчен хӑтармалла, тенӗ В. П. Волгин академик.

В. А. Обручевпа В. Н. Образцов академиксем хӑйсен сӑмахӗсенче В. П. Волгин академикӑн сӗнӗвне ырланӑ.

СССР Наука академийӗн пӗрлехи пухӑвӗ, В. Л. Комаров академикӑн сывлӑхӗ начаррине шута илсе, вӑл ыйтнипе килӗшнӗ: ӑна СССР Наука академийӗн Президенчӗ пулса ӗҫлессинчен хӑтарнӑ. Пӗрлехи пуху В. Л. Комаров академика Наука академийӗн руководствинче нумай ҫулсем хушши ӑнӑҫлӑн ӗҫлесе пынӑшӑн тав тунӑ.

А. А. Байков академик академиксен ушкӑнӗн ячӗпе СССР Наука академийӗн Президенчӗ пулма Сергей Иванович Вавилов академика, Наука академийӗн физика институчӗн директорне суйлама сӗннӗ. А. А. Байков академик Вавилов академик ҫинчен ҫапла каланӑ: С. И. Вавилов академик физика оптикин питӗ паллӑ ученӑйӗ, вӑл лайӑх организатор пулса тӑрать. Темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ вӑл П. Н. Лебедев ячӗпе тӑракан физика институтне ӑнӑҫлӑн ертсе пырать.

Пухура Фок, Папалекси, Орбели, Волгин, Кржижановский, Зелинский, Семенов, Бардин, Юрьев, Мещанинов, Мусхелишвили академиксем тата Светлов профессор сӑмах тухса каланӑ. Вӗсем С. И. Вавилов академик пысӑк ученӑй пулнине, наукӑн пур енӗсемпе те интересленнине, ӑна Наука академийӗнче те тата унӑн тулашӗнче те сума суннине палӑртнӑ. Академиксем С. И. Вавилов ҫинчен вӑл общественлӑ паллӑ деятель пулнине, РСФСР Верховный Совечӗн депутачӗ, Наука академийӗн секретарӗ пулнине каласа панӑ. Н. Г. Бруевич пӗрлехи пухӑва Наука академийӗн Президиумӗ ячӗпе Наука академийӗн отделенийӗсен пур бюровӗсенчен те, ҫавӑн пекех тата Академин институчӗсемпе учрежденийӗсенчен те постановленисем килни ҫинчен каласа панӑ. Ҫав постановленисенче—тенӗ Бруевич,—С. И. Вавилов академика СССР Наука академин Президенчӗ пулма суйлама сӗнеҫҫӗ.

В. Л. Комаров академик та хӑй Наука академийӗн Президиумӗ ячӗпе янӑ ҫырӑвӗнче СССР Наука академийӗн Президенчӗ пулма Сергей Иванович Вавилов академика суйлама кӑмӑл тунӑ.

Академиксен пӗрлехи пухӑвӗ СССР Наука академийӗн Президенчӗ пулма Сергей Иванович Вавилов академика пӗр кӑмӑллӑн суйланӑ.

СССР Наука академийӗн Президенчӗ С. И. Вавилов академик пӗрлехи пухӑва хӗрӳллӗ сӑмах каланӑ. Унӑн сӑмахне академиксем тимлӗн итленӗ, хӗрӳллӗн алӑ ҫупса ырланӑ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗЕ

Чӑваш АССР-ӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене, ялхуҫалӑх, промышленность, культура тата искусство работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Малалли. Пуҫламӑшӗ «Чӑваш Коммунин» 135-мӗшпе 138-мӗш номерӗсенче.

КАНАШ ХУЛИ ТӐРӐХ:

2. Иван Фадеевич **Гатина** — вагонсем юсакан заводри инструментсем хӑйракана.
3. Трофим Прокопьевич **Горшенина**—вагонсем юсакан заводри цех мастерне.
4. Дмитрий Константинович **Говорухина**—вагонсем юсакан заводри фрезеровщика.
5. Иван Кондратьевич **Кондратьева**—ялхуҫалӑх механизаци шкулӗн директорне.
6. Лидия Ивановна **Красичковӑна**—ВКП(б) хула комитечӗн организаципе инструкторсен пайӗн заведующине.
7. Николай Ильич **Липатова**—пир-авӑр фабрикинчи слесаре.
8. Василий Евгеньевич **Литвина**—Канаш станцин паровоз деповӗнчи котельщика.
9. Георгий Алексеевич **Мазурова**—вагонсем юсакан заводри юсас ӗҫ тата строительство цехӗн начальникне.
10. Петр Сергеевич **Махова**—1-мӗш номерлӗ учдорстройӑн платниксен бригадирне.
11. Никифор Николаевич **Николаева**—вагонсем юсакан заводри аслӑ кочегара.
12. Николай Александрович **Николаева**—Канашри ҫыхӑну узелӗн линейно-технически участокӗн начальникне.
13. Илья Васильевич **Солдатенкова**—ҫулӑн 5-мӗш дистанцийӗнчи тимӗрҫе.
14. Петр Тимофеевич **Семенова**—вагонсем юсакан заводри тимӗрҫе.
15. Иван Иванович **Степанова**—пир-авӑр фабрикинчи смена мастерне.
16. Михаил Дмитриевич **Черноногана**—2-мӗш номерлӗ чугун ҫул училищин директорне.

КУСЛАВККА РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Мария Алексеевна **Алексеевӑна** — заводри рабочие.
2. Алексей Семенович **Антонова**—ҫыхӑну кантурӗн начальникӗн заместительне.
3. Кузьма Петрович **Антонова**—МТС-ри трактор бригадин бригадирне.
4. Яков Николаевич **Иванова** — райпромкомбинатри урапа тӑвакана.
5. Нина Николаевна **Казаковӑна** — Куславккари «Прогресс» артельри ҫӗвӗҫе.
6. Владимир Семенович **Котова**—заводри главнӑй инженера.
7. Владимир Андреевич **Крючкова**—заводри цех начальникне.
8. Алексей Гаврилович **Миловидова** — заводри мастера.
9. Александр Григорьевич **Наумова** — заводри электромонтера.
10. Мигназ Низамутдинович **Низамутдинова** — Эльменкассинчи «Кзыл-Куч» колхоз председательне.
11. Александр Павлович **Обриванова**—«Новая жизнь» колхоз председательне.
12. Алексей Яковлевич **Петрова**—заводри столяра.
13. Мария Алексеевна **Салыкинӑна**—заводри рабочие.
14. Иосиф Алексеевич **Сувирина**—заводри механика.
15. Николай Александрович **Тимофеева**—заводри цех начальникӗн ӗҫӗсене туса пыракана.
16. София Ивановна **Федоровӑна**—Карачри вулав ҫурчӗн заведующине.
17. Владимир Иосифович **Вишбейна** — Куславккари 2-мӗш номерлӗ ФЗО шкулӗн производство вӗрентӗвӗн мастерне.
18. Геня Мошковна **Пиона** — заводри снабжени пайӗн группа руководительне.
19. Федор Николаевич **Чернышева** — райуполнаркомзаг агентне.

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОН ТӐРӐХ:

1. Давыд Александрович **Акчурина** — «Красный Октябрь» колхоз председательне.
2. Вера Алексеевна **Алексеевӑна** — «КИМ» артельри ҫӗвӗҫе.
3. Татьяна Яковлевна **Васильевӑна** — «Красный Октябрь» колхозри ферма заведующине.
4. Вера Спиридоновна **Герасимовӑна**—МТС трактористкине.
5. Михаил Захарович **Кунина**—райсовет исполкомӗн ҫулйӗр пайӗн начальникне.
6. Евдокия Степановна **Мироновӑна**—«Комбайн» колхозри хурт-хӑмӑр ӑстине.
7. Олимпиада Ивановна **Отачкинӑна**—Вутланри ача ҫурчӗн директорне.
8. Елизавета Павловна **Павловӑна** — «Трактор» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
9. Сергей Прокопьевич **Прокопьева** — МТС-ри трактор бригадин бригадирне.

КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОН ТӐРӐХ:

1. Роман Архипович **Архипова**—райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономне.
2. Виктор Афанасьевич **Афанасьева** —МТС-ри трактор бригадин бригадирне.
3. Ульяна Васильевна **Васильевӑна**—ВКП(б) райкомӗн организаципе инструкторсен пайӗн заведующине.
4. Николай Егорович **Гладкова**—ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарьне.
5. Емельян Димитриевич **Димитриева**—«Новое хозяйство» колхоз председательне.
6. Владимир Никифорович **Никифорова** —НКВД-ӑн районри отделени начальникӗн заместительне.
7. Ульяна Николаевна **Николаевӑна** — МТС-ри трактор бригадин бригадирне.

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Иван Николаевич **Дайзаркина**—Хӗрлӗ Чутайри механизациленӗ вӑрман пункчӗн старши механикне.
2. Михаил Никитич **Иванова**—ВКП(б) райкомӗн организаципе инструкторсен пайӗн заведующине.
3. Петр Степанович **Индейкина** — «Радио» колхоз председательне.

Малалли пулать.

Шупашкар хула Совечĕн 31-мĕш сессийĕ

Июлĕн 19-мĕшĕнче Шупашкар хула Совечĕн 31-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси Шупашкар хули 1944 çулхи бюджета мĕнле пурнăçлани çинчен тата 1945 çулхи бюджета çирĕплетесси çинчен хулари финанс пайĕн заведующийĕн Бирюкова юлташăн докладне сӳтсе-яврĕ.

— Пирĕн çĕршыври бюджет,—терĕ докладчик,—халăх хуçалăхĕпе культурине, çĕршыв вăй-хăватне ӳстерсе пыма тата ĕçсынисен пурнăç условийĕсене лайăхлатса пыма май парать. Хула бюджечĕн пысăкăшĕ çулленех ӳссе пырать. 1940 çулта, республика хăйĕн 20 çулхи юбилейне уявланă чух, хула бюджетне 6.222,2 пин тенкĕ çирĕплетнĕ пулсан, 1944 çулта 11.751,2 пин тенкĕ çирĕплетнĕ.

Çак ыйтупах сесси хула Совечĕн укса-тенкĕпе бюджет комисси председателĕн Д. Зимин юлташăн содокладне итлерĕ. Доклад тăрăх прение Е. Калиновская, К. Арзамасова, А. Столярова тата И. Золотников депутатсем, «Кожупряжь» артелĕн председателĕ Галкин, Росглаввино директорĕ Рябиков, сăкăр комбиначĕн директорĕ Лусников, Чебторг директорĕ Швец тата хула больницин главврачĕ Кузнецов юлташсем тухса каларĕç.

Сесси 1944 çул хушшинче пурнăçланă бюджетăн отчетне çирĕплетрĕ, 1945 çулхи бюджета 13.109,1 пин тенкĕ çирĕплетрĕ. Бюджета пурнăçлас ĕçри ситменлĕхсене пăлартса, вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

10.000 çĕнĕ специалист

Июлĕн 15-мĕшĕнче столицăри аслă шкулсенче вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. Государство экзаменне панă 10.000 çамрăк специалист çĕршывăн тĕрлĕ районĕсене каяççĕ. Вĕсем промышленность предприятийĕсенче, чугун çулпа шыв транспорчĕ çинче, стройкăсенче, ялхуçалăхĕнче, культурăн тĕрлĕ пайĕсенче ĕçлеме пуçлаççĕ.

Чи вăтă аслă шкул—Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕ—кăçал пысăк квалификациллĕ 900 работник ытла вĕрентсе кăларнă. Вĕсем хушшинче биологсем, химиксем, физиксем, почвоведсем пур. Мускаври Бауман ячĕпе тăракан техникăллă аслă училищĕрен 300 инженер вĕренсе тухнă.

Диплом проекчĕсенчен 80 процентне яхăн «отлично» тата «хорошо» паллăсем илнĕ. Нумай ĕçсене хуçалăхăн чи паха ыйтăвĕсем тăрăх çырнă, вĕсене халь производствăна кĕртсе пыраççĕ. Вĕренсе тухакансенчен нумайĕшĕ нимĕç оккупацийĕнчен силен курнă Украина районĕсене каяççĕ.

Мускаври Молотов ячĕпе тăракан энергетика институчĕ 200 специалист ытла вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕсем электромашиностроени, фототехника, автоматика, телемеханика, промышленность теплоэнергетики тата ытти специальноçсене вĕренсе тухнă. 44 студента хăйне уйрăм дипломсем памалла тунă.

Мускав хулин педагогика институчĕ вăтам шкулсене 320 педагог ярать. Вĕсем—вырăс чĕлхипе литература, математика, физика, истори, естествознани, ют çĕршыв чĕлхисене вĕрентекен преподавательсем пулаççĕ.

Курссенчи испытанисем те вĕçленнĕ. Хытăрах ыйтнă пулин те, экзамен паракан студентсенчен 50—60 проценчĕ тĕп дисциплинăсем тăрăх «отлично» тата «хорошо» паллăсем илнĕ.

Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ хыççăн нумай студентсене кану çурчĕсемпе санаторисене кайма путевкăсем параççĕ. ВЦСПС йышăннă тăрăх, çуллахи каникул вăхăтĕнче профсоюзсен кану çурчĕсенчи путевкăсенчен 25 процентĕнчен кая мар аслă шкулсенче вĕренекенсене памалла. Чи малтан канма тата сывалма вĕренӳ отличникĕсене, Отечественнăй вăрçăра пулнисене яраççĕ. (ТАСС).

ТĔЛПУЛУ

Кăмăллатпăр, килленетпĕр
Чие пиçнĕ пахчара.
Ак унта салтак кĕрет те
Сăнаса пăхса тăрать.
Ачисем çырла татаççĕ,
Чĕвĕл-чĕвĕл калаçса.
Килхуçи ĕнтĕ—пахчаçă
Итлет ăшшăн савăнса.
—Килмелле киле аттеçĕм!
—Килмелле çав паянах!
Çырлине татар-ха, теççĕ,
Çитсенех хăна тума.
Чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ,
Салтак хушрĕ сăмахне:
Çитрĕм, терĕ, килтĕм, терĕ,
Илсе тухăр çырлине.
Хĕрпе ывăл пăхкалаççĕ,
Курах кайрĕç ашшĕне:
Васкаса чупса пыраççĕ,
Чуптăваç çине-çинех.
Çитрĕ паттăр, çĕнтерӳçĕ,
Килне килчĕ Берлинран.
Кăвакарнă хура çӳçĕ
Асап-хурлăх курнăран.
Пурпĕр паттăр-ха, тĕреклĕ,
Ачисем те ун илемлĕ,—
Йăлтăраççĕ куçĕсем.
Чие евĕр пичĕсем.
Чуптăваççĕ, ыталаççĕ,
Юратаççĕ ашшĕне.
Калаçаççĕ, кулкалаççĕ,—
Эх, хавас ачасене!

Иван МАЛГАЙ.

Çĕнтерӳçĕсем киле таврăнчĕç

Çак кунсенче Шупашкар вокзалне Çапăçури Çартан киле таврăнакан паттăр воинсем килсе çитрĕç. Вĕсене хăйсен тăванĕсем, партипе совет организацийĕсен руководителĕсем тата хулари ĕçсынисем хирĕç тухса кĕтсе илчĕç. Хула çамрăкĕсем вĕсене чи хитре чечек çыххисем парса парнелерĕç.

Поезд çинчен аннă воинсем савăнăçлă. Вĕсем çак хулара 3—4 çул хушши пулман. Кунтан вĕсем, хăйсен тăван ашшĕ-амăшĕсенчен уйăрăлса, Тăван çĕршыва сыхлама тухса кайнă. Акă Мускав хулишĕн пынă хĕрӳ çапăçусенче хулана сыхлăшран тапăнасран паттăррăн хӳтĕленĕ Валя Минина. Унăн кăкăрĕ çинче «Отличник ПВХО» значокĕ ялкăшать.

Хула военкомĕ Елистратов юлташ паттăр воинсене кĕтсе илес ятпа пухăннă митинга уçать.

— Эпир хамăр ăсатса янă паттăр воинсене кĕтсе илтĕмĕр. Сире, Тăван çĕршывăн паттăр воинĕсене, хулари нĕтĕм ĕçсынисенчен хĕрӳллĕ салам! Сире малашне те хăвăрăн чыслă ятăрсене çӳлте тытса пыма ырă сывлăх сунатпăр,—тет вăл.

Паттăр воинсене кĕтсе илес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин председателĕ Кулагин юлташ митингра çапла каларĕ:

— Эсир çĕнтерӳçĕсем пулса тăратăр. Эпир пурте лайăх пĕлетпĕр, Тăван çĕршывăн пынă хаяр кĕрешӳре эсир çав тери пысăк йывăрлăхсем тӳссе ирттертĕр. Эсир кĕрешӳре хăвăр ятăра мухтавпа витрĕр пулсан, мирлĕ ĕçре те чыслăн ĕçлĕр. Сывă пултăр Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!—тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн сăмахне.

Митинг пĕтсенех воинсем автобус çине ларса военкомата кайрĕç. Кунта вĕсене документсем пачĕç. Воинсем хăйсен тăван килĕсене саланчĕç.

В. ПЕРМЕК.

Колхоз фронтовика пӳрт лартса панă

КӲКЕÇ. Шурчакасси ял Советне кĕрекен «Красная Армия» колхоз Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан воинсене лайăх кĕтсе илме хатĕрленет. Колхозра фронтовиксен çемьисене пулăшма ятарласа фонд тунă. Пумай ачаллă е ĕçлеме пултарайман çемьесене уйрăм пулăшу парса тăраççĕ. Сергей Павлов фронтовикăн пӳрчĕ кивелсе çĕрсе кайнăччĕ. Колхоз Сергей Павлова çĕнĕ пӳрт лартса пачĕ. Павловăн çемьи çĕнтерӳпе таврăнакан паттăр воина колхоз туса панă çĕнĕ те аслă пӳртре кĕтсе илет.

Çавăн пекех Кӳкеç ял Советне кĕрекен «Трактор» колхозра та фронтовик арăмне Мария Максимовăна колхоз вăйĕпе çĕнĕ пӳрт лартса параççĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах ялти комсомолецсемпе çамрăксем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Пионерсен лагерĕ уçăлчĕ

ВĂРНАР. Вăрман ĕçлекенсемпе сулă юхтаракансен профсоюзĕ Çаракăлра пионерсен лагерĕ организацилерĕ. Шкулсенче тăрăшса вĕреннĕ хыççăн, çуллахи каникул вăхăтĕнче пионерсем унта лайăх канма пултараççĕ. Июлĕн 14-мĕшĕнче пионерсен лагерьне уçрĕç.

Лагерьте вăрман организацисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен ачисем канаççĕ. Çар çыннисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ачисене тата тăлăх ачасене профсоюз райкомĕ путевкăсем йӳнĕ хакпа е укçасăрах панă.

Пионерсен лагерĕ икĕ смена хушши ĕçлет. Çав вăхăтра унта 3-шер эрне хушши пĕтĕмпе 75 ача канмалла.

(Хамăр корр.).

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

ЕЛЧĔК. Тăрмăшри 7 çул вĕренмелли шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленет. Ку ыйтăва партин пуçламĕш организацин пухăвĕнче тата «Новый путь» колхоз правленийĕнче сӳтсе-явса, татăклă ĕçсем тума йышăнса хăварнăччĕ.

Халĕ кунта шкул кăмакисене юсас, шкул йĕри-тавра пахча карти тытас тата пĕрлешӳллĕ мунча тăвас ĕçсем пыраççĕ.

Иртнĕ эрнере колхозниксем шкул валли вутă касса хатĕрлеме тытăннă. Унта 25 çын ĕçлеççĕ.

М. ЕГОРОВ.

Кану çурчĕсемпе санаторисен йышĕ ӳсет

Çурçĕр Кавказра нумай вăхăт хушши хупăнса тăнă хыççăн 25 санатори уçăлать, вĕсене лайăх юсанă. «Горячий ключ» курорт ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ. Сальск хирĕсенче Çурçĕр Кавказри «Маныч» ятлă пĕртен-пĕр кумыс лечебници уçăлать. Ростовпа Таганрог хулисен сывахĕнче кану çурчĕсем ĕçлеме пуçланă. Геленджикри, Туапсери тата Сочири санаторисем канакансене кĕтсе илме хатĕр.

Çуллахи сезонра Çурçĕр Кавказри юсанă курортсенче 20.000 çын ытла канма, сывалма пултараççĕ. (ТАСС).

Перекет кассисене хывнă укçа шучĕ ӳсни

1945 çулхи пĕрремĕш çур çулта çĕршыври перекет кассисене хунă укçа 1 миллиард та 148 миллион тенкĕ ӳснĕ. Çур çул хушшинче çавăн чухлĕ нумай укçа хывни вăрçăччен пĕрре те пулман.

Перекет кассисене хывнă укçа шучĕ пуринчен ытларах Мускавра, Ленинградра, Хабаровскпа Краснодар крайĕсенче, Ростов, Свердловск облаçĕсенче тата ыттисенче те ӳснĕ. (ТАСС).

Грюнвальдри уяв

ВАРШАВА, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 15-мĕшĕнче Польша халăхĕ славянсен пĕрлешнĕ вăйĕсем нимĕç крестоносецĕсене хирĕç Грюнвальд патĕнче çапăçнăранпа 535 çул тултарнине уявласа ирттернĕ. Историллĕ уйхирте (унăн варринче нумаях пулмасть Обелиск лартнă) Польшăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен пынă темиçе пин çын пухăннă. Уява пынисем хушшинче—Польша Халăх Совечĕн президенчĕ Б. Берут, премьер-министр Э. Осубка-Моравский, Польша çарĕн главнокомандующийĕ Роля-Жимерский маршал, Польша министрĕсем, Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕн генералĕсемпе офицерĕсем, çавăн пекех Польшăри партисен, çамрăксен тата обществăллă организацисен представителĕсем пулнă.

Уявра çавăн пекех СССР-ăн Польшăри посолĕ Лебедев, СССР-ăн Польшăри çар миссийĕн начальникĕн заместителĕ Красильников генерал-лейтенант, Украина ССР Совнаркомĕн Председателĕн заместителĕ Никола Бажан, Украина поэчĕ Максим Рыльский, мĕнпур славянсен комитечĕн председателĕ Гундоров генерал-лейтенант, Литва, Белоруссии тата Чехословаки республикисен представителесем пулнă.

Турра кĕлтунă хыççăн Мазурски округ делегацийĕн членĕсем (Грюнвальд халĕ çав округа кĕрет) пĕрер ывăç тăпра илнĕ. Çав тăпрана вĕсем Краковри Костюшко тĕми çине пăрахмалла.

Çакăн хыççăн чаплă обстановкăра Грюнвальд хирĕнче памятник никĕсне хывнă. Вăл памятник славян халăхĕсен туслăхне тата вĕсем нимĕç захватчикĕсене çĕнтернине палăртса тăмалла.

Б. Берут Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕн маршалĕсене, генералĕсемпе офицерĕсене «Грюнвальд хĕресĕ» ятлă орденпа награддăласси çинчен Польша Халăх Совечĕ йышăннă решение вуласа панă. Вĕсем хушшинче Г. К. Жуков, К. К. Рокоссовский, И. С. Конев маршалсем тата Польша çарĕн главнокомандующийĕ М. Роля-Жимерский маршал пур.

«Грюнвальд хĕресĕ» ятлă орденпа тата Польшăн премьер-министрне Осубка-Моравские наградăланă тата нимĕçсене çĕнтерес ĕçре пысăк вырăн йышăннă государствăсен правительствисен пуçлăхĕсене: Украина ССР Совнаркомĕн Председательне Н. С. Хрущева, Белоруссии ССР Совнаркомĕн Председательне П. К. Пономаренкăна, Литва ССР Совнаркомĕн Председательне М. А. Гедвиласа наградăланă.

Орденсем панă хыççăн Б. Берут пухăннисене çапла каланă:

«Эпир кунта пирĕн асаттесен ятне асăнса чаплă йăлапа хисеплеме çеç мар, ирĕклĕ те никама пăхăнман халăхăн туйăмĕсене палăртма, çавăнпа пĕрлех унăн пĕрлешнĕ славян халăхĕсемпе тăванла туслăн пурăнас туйăмне палăртма пухăннă.

Кунта, Грюнвальд хирĕнче, гитлеризма çĕнтернĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Вăл ялавсем паттăр Хĕрлĕ Çарăн—авалхи воинсен йăлисене тытса пыракан çарăн ялавĕсем. Хĕрлĕ Çарпа пĕрле походсенче пулнă Польша çарĕ унпа пĕрле иртнĕ çапăçусен пĕрлехи опычĕпе çыхăнса тăрать.

Эпир малашне те ирĕклĕ пулса хамăрăн тăван халăхăн ĕçне туса пырас тетпĕр пулсан,—тенĕ малалла Берут,—пирĕн чи паллă заповедь вырăнĕнче пĕтĕм славян халăхĕсене пĕрлештерсе тăракан никĕс—туслăх пулмалла».

Çавăн пекех Роля-Жимерский маршал тата мĕнпур славянсен комитечĕ ячĕпе Гундоров генерал-лейтенант сăмах тухса каланă.

Уяв Польша çарĕн соединенийĕсен пысăк парачĕпе вĕçленнĕ. Парада поляк çамрăкĕсен организацийĕсем, Польшăн тĕрлĕ хулисенчен пынă делегацисем, политикăллă тата обществăллă организацисем хутшăннă.

Петэна суд тăвас умĕн

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 23-мĕшĕнче Филипп Петэна суд тума пуçлаççĕ. Ăна икĕ ĕçшĕн айăплаççĕ: государствăн шалти хăрушлăхне хирĕç каварлашнăшăн тата тăшманпа çыхăнса тăнăшăн.

Общество енчен айăплакан Андре Морнэ хăйĕн заключенине çырса пĕтерпĕ, ăна суд пуçланă чухне вуласа параççĕ.

Айăпласа çырнин малтанхи пайĕнче Петэна перемири договорĕ çине алă пуснăшăн, республика президенчĕн вырăнне пĕтернĕшĕн, пĕтĕм власа хăйĕн аллине илнĕшĕн, Францири депутатсен палатине сената салатса ярса, вĕсене пухманшăн айăплаççĕ.

Çавăн пекех Петэна «республикăна пĕтерсе хунăшăн» айăплаççĕ. «Аксьон Франсез» ятлă монархиллĕ хаçат руководителĕ Шарль Моррас патне çырнă çырура «Францире наследство йĕркипе куçса пыракан монархи пуласси не эпĕ шанатăп», тесе каланине кăтартса параççĕ.

Петэна кагулярсен фашистла обществипе çыхăнса тăнăшăн, Вишире вăл полици руководителĕ Жозеф Дарнан пек çынсене хапăлласа йышăннăшăн, Францине Германи комитечĕн руководителĕпе де Бринонпа çыхăну тытнăшăн, Пьер Лаваль премьер-министр пулнипе килĕшнĕшĕн айăплаççĕ.

Айăпласа çырнинче малалла çапла каланă: Петэн «поражение килĕшнĕ тата поражение йышăннă», 1940 çулта Гитлерпа Монтуарта тĕл пулса Франци ятне çĕртнĕ, унта вăл «нимĕçсемпе пĕрлешсе ĕçлеме килĕшсе намăсланнă», тенĕ.

Тулашри политика тытса пырас тĕлĕшпе çаксемшĕн айăплаççĕ: Петэн Японин Индо-Китая кĕрсе кайнипе хирĕç протестлемен; Францин Сирипе Тунисри базисене тăшман аллине панă, çавна пула тĕпĕл держависем, Британи блокадине тапса, Франци империйĕн территорийĕ урла хăйсен çарĕсем валли кирлĕ хатĕрсем тăратма пултарнă; Францин Левантри аэродромĕсене тăшман аллине панă; Çурçĕр Африкăна пырса аннă союзниксен çарĕсене хирĕç пеме хушнă; Францин çар карапĕсене путарма хушнă, çапла вара Франци флотне союзниксен е нейтральнăй çĕршывсен порчĕсене çитме чăрмантарнă; Францин Антильски тата Мартиника утравĕсен губернаторне çар карапĕсене путарма тата Францин çар самолечĕсене çунтарса яма приказ панă.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ПАРТИСЕН ПУÇЛĂХĔСЕ Н БУДАПЕШТ ХУЛИНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ КАНАШЛĂВĔ

БУДАПЕШТ, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 13-мĕшĕнче Миклош Бела премьер-министр патĕнче партисен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура демократиллĕ партисен пуçлăхĕсем пулнă: Ракоши, Сакаши, Тильди, Ковач, Броди тата статс-секретарь Балог.

Канашлура Венгрин экономикăллă ыйтăвĕсене сӳтсе-явнă. Партисен пуçлăхĕсем финанс ыйтăвĕсене мĕн майпа татса парасси çинчен калаçса татăлнă. Çав канашлура хальхи условисенче мĕнле задачăсене пурнăçа кĕртме май пуррине кăтартса панă, çавăн пекех тата çитес вăхăтра экономика программине мĕнле илсе пымаллине кăтартса панă. Парти пуçлăхĕсем ку ыйту тăрăх хăйсен шухăшĕсене пĕр-пĕрине килĕштернĕ.

ФРАНКО ПĂЛХАВНЕ УЯВЛАНИНЕ ХИРĔÇ РИМРА ПРОТЕСТЛЕНИ

РИМ, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Римри Ирĕклĕх Комитечĕн делегацийĕ министрсен совечĕн государство секретарĕ Амендола патне пынă та çапла каланă: Франко посольстви пуçарнипе, Испанин халăх республикине хирĕç Франко пăлхав пуçланине уявлама хатĕрленеççĕ, столицăри халăх çавăн пирки питĕ пăшăрханать, тенĕ. Çав «уявра» Италин демократиллĕ правительствин пĕр членĕ те, пĕр чиновникĕ те ан пултăр, тесе ыйтнă делегаци.

ИТАЛИН ПЫСĂК ПРОМЫШЛЕННИКНЕ ТĔРМЕРЕН КАЛАРНĂ

РИМ, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Миланран пĕлтернĕ тăрăх, сенатор пулнă Гуидо Донегание—фашизм вăхăтĕнче питĕ пуйса кайнă паллă промышленника икĕ эрне хушши тытса усранă хыççăн тĕрмерен кăларса янă. Монтекатини завочĕсенчи рабочисем (Донегани вăл заводăн акционерĕ шутланать), ăна ирĕке кăларнине протестлесе, ĕçлеме пăрахнă.

ТРИЕСТРА ÇЫНСЕНЕ АРЕСТЛЕÇÇĔ

БЕЛГРАД, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин телеграф агентстви Любляны хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çар влаçĕсем Триестра нумай пулмасть Триестăн ирĕклĕх скупщинин председательне Джузеппе Погасси доктора тата фашизма хирĕç пыракан ытти темиçе çынна тĕрмерен кăларнă. Çакăн хыççăн союзниксен çар влаçĕсем фашизма хирĕç пыракан выранти темиçе вунă çынна çĕнĕрен арестленĕ.

СЛОВЕНИРИ ИРĔКЛĔХ ФРОНЧĔН 1-МĔШ КОНГРЕСĔ

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Белградри радио пĕлтернине парать. Çав пĕлтерӳре каланă тăрăх, Любляны хулинче Словени ирĕклĕх фрончĕн 1-мĕш конгресĕнче Триестпа Словени Приморьине Югославипе пĕрлештерме ыйтнă. Белградри радио çапла хушса калать: конгресра 700 делегата яхăн. Делегатсен шутĕнче Австрирен, Италирен тата ытти çĕршывсенчен пынă çынсем пур.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Борнео утравĕ çинче Австрали çарĕсем юханшыв çинчи Маруду портне йышăннă.

Июлĕн 16-мĕшĕнче американецсен 350 ытла бомбардировщикĕ Японин Кюсю утравĕ çинчи аэродромĕсемпе промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Ку ĕçе Европăран пынă «А—26» йышши самолетсем пирвайхи хут хутшăннă. Ытти самолетсем Амами (Рюкю) утравĕсене тапăннă. Кунсăр пуçне, Америка авиацийĕ Формоза, Пескадор, Хайнань, Целебес утравĕсем çинчи çар объекчĕсем çине, çавăн пекех Амой, Сватоу тата Гонконг районĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 18-мĕшĕнче американецсен авианосецсем çинчи самолечĕсем Японин Иокосуко тинĕс-çар базинче Япони суднисене тапăннă. Америкăпа Англин авианосецсем çинчи бомбардировщикĕсем Японин Хонсю утравĕн хĕвелтухăç пайĕнчи районсемпе Токио хулине тапăннă.

Американецсен 3-мĕш флочĕн çамăл карапĕсем Хонсю утравĕн хĕвелтухăç сырание персе тăнă.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ

1931 çулта Шупашкарта Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Ялхуçалăх специалисчĕсен колхозниксемпе колхозницăсене канаш паракансем кăна мар, ĕçе организацилесе, агротехникăпа зоотехникăна вĕрентсе ертсе пыма пултаракан çынсем пулмалла. Çакăн пек пулас пулсан, ялхуçалăхне ертсе пыракан кашни специалистăн хăйĕн ĕçе пур енчен те тĕплĕн пĕлмелле.

Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнче вĕренекенсем хăйсем суйласа илнĕ специальноçсем тăрăх чи малтанах наука вĕрентĕвĕсене теори енĕпе алла илеççĕ, унтан практикăллă ĕçре пулаççĕ. Агрономсемпе зоотехниксен пур енчен те нумай пĕлекен, ăста специалистсем пулмалла. Çавăнпа вĕсене марксизм-ленинизм никĕсĕсене, политикăллă экономие, ботаникăна, зоологине, физикăпа, чĕрчунсен анатомине, ӳсентăрансен физиологине, микробиологипе хими дисциплинисене тĕплĕн вĕрентеççĕ. Агрономсемпе зоотехниксене хăйсем суйласа илнĕ специальноççене тĕплĕн вĕрентнисĕр пуçне, экономика курсне, колхозсемпе совхозсене тата МТС-сене ертсе пымалли майсене тĕплĕн вĕрентеççĕ. Унсăр пуçне агрономсене—зоотехника дисциплинине, зоотехниксене—агрономсен дисциплинине кирлĕ чухлĕ вĕрентеççĕ.

Ялхуçалăх институчĕн студенчĕсем 1-мĕш курсрах пуçласах практикăллă занятисене пулаççĕ. 3-мĕш курсра вĕренекен студентсем малта пыракан колхозсенче производствăллă практикăра пулаççĕ. Кунта вĕсем звеносемпе бригадăсенчен пуçласа ялхуçалăхĕнчи нумай енлĕ пысăк ĕçсене организацилесе ертсе пыма вĕренеççĕ.

Паллах, пысăк квалификациллĕ агрономсемпе зоотехниксем вĕрентсе хатĕрлес ĕçре малтанхи çулсенче чылай пысăк йывăрлăхсем пулчĕç. Вăл йывăрлăхсене институт хăюллăн çĕнтерсе, хăвăрт аталанса пычĕ. 1931 çулта институтра пĕтĕмпе те 7 кафедра тата наука работникĕсем 19 çын кăна пулнă пулсан, хальхи вăхăтра унта 18 кафедра. Вĕсенче наука работникĕсем 45 çын ĕçлеççĕ.

Кафедрăсемпе наука работникĕсем çителĕклĕ пулни институт умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама май пачĕ. 1939 çултанпа институт социализмлă ялхуçалăхĕ валли 405 агрономпа зоотехник вĕрентсе кăларчĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ Чăваш республикинче, Узбек ССР-ĕнче, Казах ССР-ĕнче, Киргиз ССР-ĕнче, Белоруссире, Украинăра, Астрахань, Ульяновск, Курск тата ытти облаçсемпе крайсенче ĕçлеççĕ.

Хамăр республикăра ĕçлекен специалистсенчен 8 çын районри старши зоотехниксем, 6 çын старши агрономсем пулса ĕçлеççĕ. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче, Халăх Комиссарĕсен Советĕнче тата ВКП(б) Обкомĕпе ВЛКСМ Обкомĕнче те пирĕн институтран вĕренсе тухнă специалистсем сахал мар ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Институт пысăк квалификациллĕ агрономсемпе зоотехниксем вĕрентсе кăларнисĕр пуçне, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ енĕпе ялхуçалăхĕнче ĕçлекен ытти специалистсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе те хастарлăн ĕçлет. 1941—1945 çулсем хушшинче кăна колхоз председателĕсен, техниксен, кайăк-кĕшĕк ĕрчетекенсен, бригадирсен, полеводсен тата ыттисен курсĕсенчен пурĕ 3427 çын вĕрентсе кăларнă.

Колхозниксемпе колхозницăсен агротехникăпа зоотехника пĕлĕвĕсене ӳстерес тата ялхуçалăхĕ тунă çĕнĕ çитĕнӳсене анлăн сарса пырас майпа институтри наука работникĕсем 30 кĕнеке çырса кăларнă. Хальхи вăхăтра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пĕр учебник тата тыр-пулпа пахчаçимĕçсем туса илес ĕçе вĕренме 5 кĕнеке çырса хатĕрленĕ. Наука работникĕсен 8 ĕçне пичете хатĕрлесе çитернĕ.

Учебниксемпе пĕчĕк кĕнекесем çырса кăларнисĕр пуçне, институтри наука работникĕсем республикăра тухса тăракан хаçатсенче 95 статья пичетлесе кăларнă. Институт уçăлнăранпа унта ĕçлекен наука работникĕсем 69 тема тăрăх наукăпа тĕпчев ĕçĕсене туса ирттернĕ. Вăл ĕçсенчен 35 тема тăрăх статьясемпе кĕнекесем çырса, Мускавра тухса тăракан хаçат-журналсенче пичетлесе кăларнă.

Хальхи вăхăтра институтри наука работникĕсем 19 тема тăрăх наукăпа тĕпчев ĕçĕсене туса пыраççĕ. Л. А. Пельцих профессор Чăваш республикинчи условире çĕрулми тухăçлăхне ӳстерес ыйтупа ĕçлет. А. В. Тарчевский доцент çĕнĕ йышши плуг конструкцилет. Кружилин доцент Чăваш республикинчи условире люпинпа çĕре çемçетмелле тăвас ыйтăва тĕпчесе вĕренет. И. А. Рыжов доцент ертсе пыракан кафедра выльăх-чĕрлĕхе тăрантарма вырăнти минераллă апатсемпе усă курма май пуррине тĕпчесе вĕренет. Социализмлă ялхуçалăх предприятийĕсене организацилес енĕпе ĕçлекен кафедра заведующийĕ П. А. Коренев доцент Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз çинчен кĕнеке хатĕрлет.

Наукăллă ĕçсене тума институтра вĕренекен студентсене те анлăн хутшăнтараççĕ. Агрономи факультетĕнче III-мĕш курсра вĕренекен студентка Б. Чаплина Л. А. Пельцих профессор ертсе пынипе, çĕрулми тухăçне хăпартмалли майсене тупас тĕлĕшпе ĕçлет. Çав курсра вĕренекен студентка Карабанова юлташ, Петропавловский доцентпа пĕрле, хура тулă агротехникине тĕпчесе вĕренет. А. В. Плетнев доцент ертсе пыракан кафедра зоотехника факультетĕнчи II-мĕш курсра вĕренекен 16 студента наукăпа тĕпчев ĕçне хутшăнтарнă. Кăçалхи июнĕн 25-мĕшĕнче çак студентсен пĕррĕмĕш научнăй конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта 9 студентка хăйсен ĕçĕсем çинчен докладсем туса пачĕç. Уйрăмăнах Елизарова, Давыдова, Заглада, Артамонова юлташсен доклачĕсем паха пулнине палăртмалла.

Студентсене наукăпа тĕпчев ĕçне анлăн хутшăнтарни вĕсене пысăк квалификациллĕ специалистсем пулма нумай пулăшать.

Институтăн нумай енлĕ ĕçĕнче политикăпа çутĕç ыйтăвĕсем тăрăх пропаганда туса пыни те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕçе уйрăмăнах Отечественнăй вăрçă çулĕсенче лайăх туса пынă. Юлашки икĕ çул хушшинче кăна институтри наука работникĕсем тĕрлĕ темăсем тăрăх 200 ытла лекцисемпе докладсем туса панă. Çак пысăк ĕçре уйрăмăнах марксизм-ленинизм кафедрин заведующийĕ П. Л. Лебедев доцент тата çак кафедрăн аслă преподавателĕсем А. З. Орленкăпа И. П. Анисимов юлташсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

Наукăпа çутĕç пропагандине туса пырас ĕçре А. В. Плетнев доцент тата Л. А. Пельцих профессор, Н. Д. Гнедин доцент тата А. Н. Миронова ассистент нумай тăрăшса ĕçленине палăртмалла.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ 15-мĕш çул ĕçлет. Паллах, çак вăхăт хушшинче çитменлĕхсемпе йывăрлăхсем те сахал мар пулчĕç. Апла пулин те, пирĕн институт тата институтран вĕренсе тухнă агрономсемпе зоотехниксем социализмлă ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕç.

Халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă пĕтнĕ хыççăн, институт работникĕсем тата лайăхрах, нихçанхинчен те хаваслăрах ĕçлеме тытăнчĕç. Эпир хамăр института çĕршыври чи лайăх аслă шкулсен ретне кăларас тесе тăрăшатпăр.

Н. ТУРАЕВ.

Институт директорĕн наукăпа вĕренӳ енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

МАНУЭЛЬ ТЕЛЬЕНЕ МЕКСИКĂН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРНЕ ЛАРТНĂ

МЕКСИКО, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Мексика президенчĕ ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ пулнă Мануэль Тельене ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Юстици Халăх Комиссариачĕ çумĕнче кăçалхи августăн 1-мĕшĕнче Шупашкарта адвокатсем хатĕрлемелли ултă уйăхлăх юридически курс уçăлать.

Курса вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, 22 çултан иртнисене, чи малтанах орденоносецсемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене илеççĕ. Вĕренме илнĕ чухне вĕсем обществăллă тата политикăллă ĕçре мĕн чухлĕ ĕçленине пăхаççĕ. Вĕренме илнисене уйăхне 300 тенкĕ стипенди параççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ тата столовăйĕнче апатлантараççĕ.

Заявленисене кăçалхи июлĕн 25-мĕшĕччен çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Красная площадь, 26, Президиум Коллегии Адвокатов.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00376 Типография №1, Управлени полиграфпромышленности г. СНК ЧАССР. Зака. №2, ф. б. 39 42 п. п. Тираж 16.000